Прокуратура материалĕсем тăрăх

Малашне те тивĕçлипе тĕрĕслесе тăрăпăр

Наркотиксемпе усă курни тата вĕсене сарни епле пысăк преступлени пулса тăнине пурте аван пĕлеççĕ ĕнтĕ. Çавна май район прокуратури те кунпа çыхăннă ыйтусене кун йĕркинчен кăлармасть.

Анализ туни çавна кăтартса парать. 2007 çулта тата 2008 çулхи пĕрремĕш кварталта право сыхлавĕн органĕсем вырăнти самоуправлени органĕсемпе, ытти тĕрĕслев органĕсемпе пĕрле наркотиксемпе саккуна пăсса усă курнин факчĕсене тупса палăртассипе тата вĕсене чарассипе ĕçсем сахал мар туса ирттернĕ. Ку ĕçсене право сыхлавĕпе тĕрĕслев органĕсен специалисчĕсене те явăçтарнă. Хăйсен ĕçĕ наркотиксемпе тата психотроплă япаласемпе çыхăннă уйрăм çынсене, юридици вăйĕнчи çынсене тата вĕсен ĕçне-хĕлне тĕрĕслене.

Çавăн пекех район территорийĕнче «Çамрăксем наркотиксене хирĕç» акцие япăх мар ирттернине те палăртса хăвармалла. Унта пур профилактика субъекчĕсемсĕр пуçне районти шкулсем те, район хаçачĕ те, сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕсем те хутшăннă.

Наркотикла япаласемпе усă курнине тата вĕсене сарнине чарассипе районта тĕллевлĕ программа та йышăннă. Район программи епле пурнăçланса пынине ку енĕпе йĕркеленĕ комисси тĕрĕслесе тăрать. Иртнĕ çул унăн ларăвĕсене 4 ирттернĕ, кăçал вара 1 лару пулнă. Вĕсенче пуринче те наркотиксемпе саккуна пăсса усă курнипе çыхăннă ыйтусене пăхса тухнă.

Тивĕçлĕ органсемпе учрежденисем наркотиксемпе усă курассине чарас енĕпе организацилле ĕçсем те, профилактика мероприятийĕсем те туса ирттереççĕ. Сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕсем наркотиксемпе медицина тĕлĕшĕпе усă курманнисене сиплессине тата реабилитаци тăвассине йĕркеленĕ. Кунпа пĕрлех наркотик хатĕрĕсене туса хатĕрлессине тата вĕсене сарассине тĕрĕслесе тăраççĕ.

Хальхи вăхăтра районта наркотик пур препаратсем упранакан объектсем шутне Муркашри 13-мĕш номерлĕ аптека, районти тата Мăн Сĕнтĕрти больницăсем кĕреççĕ. Вĕсенче пуринче те сыхлав тата пушар хăрушсăрлăхĕн техника хатĕрĕсене вырнаçтарнă, унăн кăтартăвĕсем районти шалти ĕçсен пайĕн дежурнăйсен пайĕн пульчĕ çинче курăнаççĕ.

Медицина препарачĕсем валли рецептсем çырса панине те тĕрĕслесех тăраççĕ. Вăл шутра онкологи чирĕсемпе чирлекенсене çырса панине те. Кунпа пĕрлех медицина учрежденийĕсенче ку препаратсемпе ĕçлекенсем те тĕрĕслевсĕр юлмаççĕ.

Районти шалти ĕçсен пайĕ район территорийĕнче наркотиксемпе усă курнин тата вĕсене сарнин факчĕсене тупса палăртассипе, айăплисене уголовнăй майпа ответ тыттарассипе çине тăрса ĕçлет. Çав тĕллевпех «Наркоман» тата «Мак–2007» операцисем те ирттернĕ.

Çуллахи вăхăтра мак тата йĕтĕн акса ўстерме пултаракан вырăнсене тĕрĕслеççĕ. Вĕсем шутне уйрăм çынсен пахчисем, сад юлташлăхĕсенчи участоксем кĕреççĕ. Наркотикла тата психотроплă япаласем турттаракансене тупса палăртассипе федераллă пĕлтерĕшлĕ тата район çулĕсем çинче тĕрĕслевсем, оперативлă шырав ĕçĕсем ирттересси йăлана кĕнĕ.

Иртнĕ çул оперативлă шырав ĕçĕсен материалĕсем тăрăх 5 уголовнăй ĕç пуçарнă. 2006 çулта кун пек тĕслĕхсем 4 пулнă. Кунпа пĕрлех наркотиксемпе усă кураксансен 1 притонне е вырăнне тупса палăртнă. Сăмахран, 2007 çулхи августăн 6-мĕшĕнче 22 сехет тĕлĕнче Çĕнĕ Шоккăн ялĕнче пурăнакан В.И. Константинов чĕрĕ мак 7606 грамм пухса илнĕ. Ку факт тĕлĕшпе августăн 7-мĕшĕнче уголовнăй ĕç пуçарнă. Муркаш район сучĕн приговорĕпе 2007 çулхи октябрĕн 31-мĕшĕнче В.И. Константинова айăплă тесе йышăннă, пĕтĕмĕшле режимлă колонире 3 çул тытса усрамалла тунă.

Кашмаш ялĕнче пурăнакан Н.М. Егоров патĕнче наркотиксемпе усă курмалли вырăн йĕркеленĕшĕн 2007 çулхи декабрĕн 19-мĕшĕнче районти шалти ĕçсен пайĕ уголовнăй ĕç пуçарнă. 2008 çулхи мартăн 26-мĕшĕнче ку уголовнăй ĕçе пăхса тухма район судне ярса панă.

Иртнĕ çулхи декабрĕн 4-мĕшĕнче 23 сехет тĕлĕнче Кашмаш ялĕнче С.В. Михайлов тата О.Ю. Яриков пĕрпĕринпе калаçса татăлса наркотикла япала – героин сутнă. Ку факт тăрăх районти шалти ĕçсен пайĕ 2007 çулхи декабрĕн 5-мĕшĕнче уголовнăй ĕç пуçарнă. Халĕ ăна Чăваш Республикинчи Шалти ĕçсен министерствин следстви управленийĕ тĕпчет.

Кăçалхи пĕрремĕш кварталта наркотиксемпе саккунсăр усă курнин тĕслĕхĕсемпе çыхăннă преступленисене 3 тупса палăртнă. Иртнĕ çул çав вăхăтра ун пек преступленисем пачах пулманччĕ. Тĕрĕслев материалĕсем тăрăх районти шалти ĕçсен пайĕ 2 уголовнăй ĕç пуçарнă.

Район прокуратури психотроплă япаласем сутнипе тата вĕсемпе усă курнипе çыхăннă пур материалсене те тĕрĕслене. Тĕрĕслеве пур енлĕн ирттермен пирки уголовнăй 1 ĕç пуçарма килĕшменнин йышăнăвне пăрахăçлана. Акă кăçалхи мартăн 10-мĕшĕнче районти шалти ĕçсен пайне Д.В. Федорова больницăна выртăрни пирки телефонпа шăнкăравласа пĕлтернĕ. Вăл наркотик хатĕрĕсемпе сиенленни палăрнă. Районти шалти ĕçсен пайĕн ĕçченĕ М.М. Мясников тĕрĕслев ирттерсе 2008 çулхи мартăн 19-мĕшĕнче уголовнăй ĕç пуçарас марри пирки йышăну кăларнă. Тĕрĕслев материалĕсене тĕплĕнрех тĕпчени лару-тăрăва пур енлĕн тишкерменнине кăтартса пачĕ. Наркотикла япалана ăçтан тупнине палăртман, Д.В. Федоровăн кўршисемпе каласман, медицина ĕçченĕсем ăнлантарса панисем çук, профилактика тĕлĕшпе мерăсем йышăнман. Район прокуратури хăйĕн 2008 çулхи мартăн 20-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе асăннă йышăнăва пăрахăçларĕ, материала тĕплĕнрех тĕрĕслеме районти шалти ĕçсен пайне каялла ярса пачĕ.

Хальхи вăхăтра саккунсăр майпа наркотиксемпе усă кураксансене учета илнисем районти шалти ĕçсен пайĕнче 11 çын. Вĕсенчен 2-шĕ районти тĕп больницăра нарколог патĕнче учетра тăраççĕ. Асăннă çынсемпе профилактика ĕçĕсене туса ирттереççĕ, килĕсене пырса тĕрĕслеççĕ, ку е вăл преступленисене тума пултарнисене тĕпчеççĕ.

2007 çулта наркотик хатĕрĕсемпе саккуна пăсса усă курса административлă майпа правăна пăснин 3 тĕслĕхне палăртнă, пурин пирки те протоколсем çырнă. Кăçал та кун пек тĕслĕхсем 3 пулчĕç ĕнтĕ. Район прокуратури наркотиксемпе çыхăннă преступленисене тупса палăртассипе тата асăрхаттарассипе ытти ĕçсене те туса ирттерет. Ку ĕçсем малашне те пулса пырĕç.

Ю. СЕМЕНОВ,
район прокурорĕн пулăшаканĕ, юстици советникĕ.

Конкурс

Çĕнтерӳ кунне халалласа

Пысăк уяв çывхарса килет. Аслă Отечественнăй вăрçăра Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 63 çул çитет. Çавна май Пĕтĕм Раççейри «Единая Россия» политика партийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн политканашĕн президиумĕ çак паллă куна халалласа пултарулăх ĕçĕсен конкурсне ирттерме йышăнчĕ. Вăл апрелĕн 21 – майăн 6-мĕшĕсенче иртет.

Конкурс çак номинацисемпе пулать. «Чи лайăх сочинени», «Чи лайăх ўкерчĕк», «Чи лайăх сăн ўкерчĕк», «Чи лайăх поделка».

Сире çак ĕçсенче мĕнле темăна тĕпе хумалли кăсăклантарать пулĕ-ха. Хуравĕ вара çапла.

Пирĕн килти медаль. Çĕнтерĕве тылра та туптанă. Пирĕн çемье çĕршыва сыхланă. Манăн асатте – çĕнтерӳçĕ. Çĕнтерӳ хакĕ – шăпах çак темăсемпе пулмалла та пултарулăх ĕçĕсем. Çавăн пекех «Вĕсем çĕршывăмăршăн çапăçнă» темăпа ветерансен аса илĕвĕсене, Аслă Отечественнăй вăрçă çинчен хăйсен шухăшĕсене те çырма пултараççĕ конкурса хутшăнакансем.

Мĕн пĕлмелле тата конкурса хутшăнакансен? Конкурс ĕçĕ титул хучĕ çинче пулмалла, конкурсантăн хăй камне, адресне туллин çырмала, телефонне палăртмалла. Текста алă вĕççĕн çырма та, пичетлеме те юрать.

Каласа хăвармалла, конкурс ачасем, çул çитмен çамрăксемпе вĕренекенсем хушшинче иртет. Ăна 3 ушкăнпа пĕтĕмлетеççĕ: 7 çула çитмен ачасем хушшинче, 1-7 классенче вĕренекенсем хушшинче, шкулсенчи 8-11 классенче тата училищĕсемпе техникумсенче вĕренекенсем хушшинче. Кашни ушкăнпа виçĕ малти вырăна палăртаççĕ.

Конкурс икĕ тапхăрпа иртет: пĕрремĕш тапхăрĕ районта, иккĕмĕш тапхăрĕ республикăра. Пултарулăх ĕçĕсене «Единая Россия» политика партийĕн Чăваш регионĕнчи тата вырăнти уйрăмсенче йышăнаççĕ. Конкурса пĕтĕмлетме вырăнсенчи уйрăмра та ятарлă комиссисем пуласçĕ. Ăна майăн 9-мĕшĕнчен кая юлмасăр пĕтĕмлетеççĕ.

Çĕнтерӳçĕсене вырăнта дипломсемпе тата парнесемпе чыслаççĕ. Вĕсем республикăри конкурса хутшăнма тивĕçеççĕ. Чи лайăх ĕçсем район тата республика хаçачĕсенче пичетленеççĕ. Эппин, конкурса хутшăнмасăр ан юлăр.

Л. ПАВЛОВА.

И.Я. Яковлев çуралнăранпа 160 çул çитнĕ май

Шкулта та анлăн паллă турăмăр

Чăвашсене çутта кăларакан И.Я. Яковлев çуралнăранпа 160 çул çитнине Муркаш шкулĕнче те анлăн паллă турĕç. Акă уйăхĕнче шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем Яковлев вулавĕсене ирттерчĕç. Вĕренекенсем И. Яковлев калавĕсем тăрăх ўкерчĕксем турĕç, унăн пурнăçĕпе ĕçне-хĕлне тишкерсе викторинăна хутшăнчĕç, ăна халалласа çырнă сăвăсене ăмăртмалла вуларĕç, хăйсем те сăвăсем çырчĕç. Шкулта наукăпа практика конференцийĕ иртрĕ.

Ака уйăхĕн 22-мĕшĕнче вара шкулта чаплă уяв пулчĕ. Ăна ертсе пыраканĕсем Надя Красновапа Николай Корольков пулчĕç. Сцена çинче чăваш сăвви-юрри янăрарĕ, ташшисем куçа савăнтарчĕç. Уйрăмах Валерия Сидюшкина юрласа панă чăваш халăх юрри чуна тыткăнларĕ, ĕлĕкхи чăваш тумĕ те кăмăла кайрĕ.

Çавăн пекех залра ларакансем 8 «б» класра вĕренекенсем И. Яковлев ачалăхĕ çинчен лартса панă «Çутталла» сценкăна кăмăллăн йышăнчĕç. Н. Павловапа Д. Порфирьев пĕчĕк Иванăн аслашшĕпе асламăшĕн ролĕсене питĕ ăста, артистсенчен кая мар вылярĕç.

Уяв И.Я. Яковлев кăмăллана чăваш ташшипе вĕçленчĕ.

Оксана НИКОЛАЕВА,
Муркаш шкулĕнче 9 «в» класра вĕренекен.
Сăн ўкерчĕкре: уяв ăнăçлă иртрĕ.

Тавралăх тата чун тирпей-илемĕшĕн

Кашни ял вăл – пĕр пысăк çемье

Вăхăт шăвать, çулсем иртеççĕ. Кунран кун тавралăх та, çыннисем те улшăнса пыни куç кĕрет. Анчах та кермен пек çуртсем лартни те, ытти тĕрлĕрен çăмăллăхсемпе çĕнĕлĕхсем ял пурнăçне улăштарни те кунта пурăнакансем ытларах лайăх еннелле улшăннине кăтартмасть-ха. Хальхи вăхăтра ялсенче вулама е çырма пĕлмен çын çук тесен те йăнăш пулмĕ. Е тата телевизор тесен... Кун пек «ещĕк» кашни килренех. Хамăра хамăр нумай пĕлетпĕр, культурăн çўлти шайĕнче тăратпăр теме май пур. Апла пулин те ялсенче пулнă май мĕн куратăн-ха?

Кашни ялта тенĕ пекех кил-çуртра пуçтарăннă çўп-çапа ăçта килчĕ унта кăларса пăрахнине курма тўр килет. Çитменнине тата вăрмансемпе парксене те вараласçĕ. Мĕн кăна кăларса тăкмаççĕ пулĕ?! Кивĕ атă-пушмак та, кантăк савăтсапа та, кĕленчесем те, тимĕр-тăмăр та, тĕрлĕрен хими имçамĕсен савăчĕсем те, кивĕ тумтир те, полиэтилен пленкисем т. ыт. те. Пурне асăнса та пĕтерес çук.

Çакна вара мĕнле ăнланмалла-ха? Хамăр эпир çак çўп-çап тăкса тултарнă лаптăксем айĕнче вырнаçнă шывсенех ĕçетпĕр, çав çўп-çап тăкса тултарнă вырăнсенчех пирĕн выльăх-чĕрлĕхсем çўреççĕ.

Хамăра вара питĕ культурăллă тесе шутлатпăр. Халĕ хĕрарăма арçынран уйăрса илме те йывăр. Лешĕсем те, кусем те шăлаварпа, пирусне пурте паклаттараççĕ, «симĕс çĕленне» те тиркесех каймаççĕ. Йăлтах ку ют патшалăхсенчен килнĕ пек, анчах...

Е тата вăрмансем пирки сăмах хускатас пулсан. Ял хуçалăхĕ пирки нумай каласатпăр. Анчах улшăну лайăх еннелле çаврăнасшăн мар. Юлашки вăхăтра вăрман хуçалăхĕ те «ишĕлме» пуçларĕ. Малтанхи вăхăтра вара вăрмансенче йĕрке çирĕпчĕ. Хуран айне хумалли хăрăк вутшанкăна та хăракаласа пуçтаратчĕç çынсем. Хăрса ўкнĕ йывăçсене лесничество йĕркеленипе çийĕнчех пуçтарса тăратчĕç. Выльăхсене вăрманта кĕтсен штрафсем еплерехчĕ тата.

Халĕ пăхатăн та – тĕлĕнетĕн. Вăрмансенче утса иртме май çук хăрăк йывăç урлă-пирлĕ выртать. Никама та кирлĕ мар. Тĕслĕхрен, Ильинка лесничествине кĕрекен 50-мĕш квартал лаптăкĕнче утса иртме май çук хăрса ўкнĕ ăвăс йывăççисем выртаççĕ. Юнашарта вырнаçнă малтан «Хлебороб» колхозăн пулнă «Çăкăр варĕ» ятлă вăрманта 2007 çулта каснă хурăнсене паян кун та пуçтарса пĕтермеççĕ. Вăрманне каятăн та чун ыратать. Мĕнлерех хитре хурăнсене касса пăрахнă та вĕсем çĕрсе выртаççĕ. Турачĕсем те купи-купипе выртаççĕ. Усă курас çук пулсан мĕншĕн касмалла пулнă-ха вĕсене? Тата çакăншăн айăплисем çукши вара никам та?

Тĕрĕссипе каласан, паянхи кун çакăн пек йĕркесĕрлĕхсем никама та тĕлĕнтермеççĕ тесен те тĕрĕсех пулĕ. Анчах кунран кун кун пек çитменлĕхсем нумайланса пыни шиклентерет.

Нумаях пулмасть ялта пушар пулчĕ. Сўнтерме çыннисем пуçтарăннă пулин те, вĕсен кирлĕ хатĕрĕсем çук. Малтан пулсан кашни ялти уйрăм хуçалăхсене пушар пулас пулсан илсе тухмалли хатĕрсене çирĕплетсе тухатчĕç. Кунта вара пакурне те тупма май килмерĕ. Пушара сўнтерме килнĕ автомашинисем те аран-аран «упаленеççĕ», унтан та кунтан вĕсен шывĕ юхать. Малтан ял хуçалăх предприятийĕсенче пушара тухмалли автомашинăсем халĕ ытларах çĕрте пĕтни те самаях шиклентерет. Пулса иртнĕ пушар кăштах вăйлăрах пулнă пулсан килсе çитнĕ çак техникăпа ăна сўнтерме хĕнтерех пулĕччĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ пирĕн асаттесем вăхăтĕнче те кашни ялта тенĕ пекех пушар дружинисем пулнă.

Ялсенчи пĕвесем пирки те каласа хăвармалла. Ытларах çĕрте вĕсен хуçисем çук. Пушар чухне вĕсем патне шыв илме пыма та май çук. Пĕвесене çĕнĕрен пĕвелесси пирки шухăшлакансем те хальхи вăхăтра сахал. Пуррисем юхăнса пыраççĕ.

Эпир Мăн Сĕнтĕрти 37 № пушар чаçĕ пирки нумай каласнă ĕнтĕ. Унччен асăннă пушар чаçĕ вырнаçнă çурт паянăыран ишĕлсе анас пек ларать. Апла пулин те ăна юсама çулсеренех районта укçа çук. Пĕр пушар кăна мĕн хака ларни вара пуриншĕн те паллă. Асăннă пушар чаçĕ вара çак таврари ялсемшĕн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Ялсенче пулнă май çынсенчен тата çакна илтетĕн. «Мĕншĕн-ха районти радио пĕтрĕ?»– тесе ыйтаççĕ. Çынсем çакăн пирки пăшăрханнине ăнланма май пур. Тĕслĕхрен, хальхи вăхăтра çил-тăвăл алхасса темиçе кунлăх электроэнергисĕр юлас пулсан, халăхпа епле майпа çыхăну тытма май пур-ха? Е тата унран та хăрушăраххи пулас пулсан... Радио пĕтериччен малтан тĕплĕнрех шухăшламалла пулнă. Паянхи кун халăхăн ытларах пайĕ район хыпарĕсене кăна мар, кунсерен тухакан Чăваш радио передачисене те итлеймест. Ку, паллах, малалла пăхса тунă утăм мар.

Кунсăр пуçне тата ялсенче эрех ĕçесси чакмасть тесе нумай каласатпăр. Анчах та усси курăнсах каймасть. Ялсенче тĕрлĕрен ĕçме юрăхсăр спиртлă шĕвексене сутниех хальлĕхе çĕнĕрен те çĕнĕ вăй питти çынсене «леш тĕнчене» ăсатать. Ку ыйтупа хăй вăхăтĕнче депутатсен районти Пухăвĕн ларăвĕнче ятарлă программа та йышăннăччĕ. Анчах та вăл хут çинче кăна юлчĕ пулмалла. Çакă районăн 2007 çулхи бюджетне тупăшсем енĕпе епле пурнăçланине тишкернĕ чухне те курăнчĕ. Районĕпе иртнĕ çул çак шĕвексене сутакансене пĕтĕмпе те 13,1 пин тенкĕ кăна штрафланă. Вĕсене сутакансем вара çĕршер пин тенкĕ тупăш туса çынсен сывлăхне сиен кўреççĕ, пурнăçпа сывпуллаштараççĕ. Тĕрĕссипе хальхи вăхăтра вĕсем кашни ялтах çук мар.

Эпĕ яланах ял çыннисемпе калаçнă чухне çапла калатăп: «Пĕр ял вăл пĕр çемье пек пулмалла». Ял çыннисен кўршĕлĕхĕ, туслăхĕ пĕрле пухăнса эрех ĕçме анчах кирлĕ мар. Çитменлĕхсене пĕтерме те пĕрле кар тăмалла. Кашни ял çыннин тăван ялĕшĕн чунĕ ыратмалла. Çавăн чухне кăна ялта пурăнма та, ĕçлеме те вăй-хăват пулĕ, ялсем те, тавралăх та илемленсе пырĕ.

П. ВОРОБЬЕВ.

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

Тăххăрмĕшсем маттур

Москакасси шкулĕнче тăххăрмĕш класра питĕ пултаруллă ачасем вĕренеççĕ. Вĕсем тĕрлĕ конкурссене хутшăнса район кăна мар, республика чысне те хўтĕлеме пултараççĕ. Вĕсенчен Наташа Малькована, Татьяна Андреевана, Павел Еропанова, Алена Кондукторована, Саша Пушкина палăртмалла. Акă ака уйăхĕн 12-мĕшĕнче Павел Еропанов Элĕк районĕнче «Янравлă саслă ачалăх» конкурсра район чысне хўтĕлерĕ.

Москакасси шкулĕнчи ташă ушкăнĕ ака уйăхĕн 19-мĕшĕнче республикăра 1-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарчĕ.

Халĕ вара Москакасси шкулĕнче вĕренекенсем районти «Зарница» тата «Орленок» вăйăсене хатĕрленеççĕ. Вĕсем ку ăмăртусенче те хăйсене лайăх енчен кăтартасса шанатпăр.

Анна ЦАРЕВА.